## Муркаш чиркĕвне тăвасси паян хумхантаракансене, Муркашпа Муркаш районĕнче пурăнаканĕсене Чĕнсе калани

**Хисеплĕ тăвансем! Муркашсем!**

Митрополит Варнава пиллĕхĕпе пирĕн ялта православи тĕнне ĕненекенсем кĕлĕ çуртне хăпартассипе ĕçсем пуçларĕç. Кайран вара Владимирти Турă Амăшĕн чиркĕвĕ те пулĕ.

Чиркӳсене яланах чиркĕве çӳрекенсен укçи-тенкипе тунă. Паянхи çăмăл мар вăхăтра, чиркӳ патшалăхран уйрăм пулнă чух, хисеплĕ çыннăмăрсем – Муркашри пулас чиркĕве çӳрекенсем – хамăрăн çине çеç шанмалла.

Ку ĕçре уйрăмах, хисеплĕ предпринимательсем, эпир те сирĕн çине ытларах шанатпăр. Раççейри вырăс купцисен ырă енĕсенчен пĕри яланах ыр кăмăллăх пулнă. Чăн тĕне ĕненекен купцасем пулăшу ыйтакансене яланах пулăшнă. Ку енĕпе хăйсем те пуçаруллă пулнă, мĕншĕн тесен чиркĕве хывни вăл – ĕмĕрлĕх. Турă эпир панă кашни тенкĕшĕн, пусшăн пире ырăлăх парĕ.

Хальхи вăхăтра, çĕршывăмăрта халăх йышĕ пысăк хăвăртлăхпа чакнă чух, обществăра нравственноç пахалăхĕсем çухалса пынă чух, чиркӳсене çĕнĕрен чĕртес ыйту питĕ çивĕч тăрать. Православи чиркĕвĕ нихăçан та усала вĕрентмен. Туррăн тĕп халалĕсене (ан вĕлер, ан вăрла, ан аскăнлан) эпир пурте пĕлетпĕр. Вĕсем çавăн пекех пур çĕршывсен саккунĕсен никĕсĕсем пулса тăраççĕ. Кĕлĕ иртме пуçласан, хăвăр таврара та, прихутра та лару-тăру йĕркеленсе кайнине туйса илĕр.

Чăн тĕне ĕненекенсем! Эпир пурте çăласшăн, анчах Христос чиркĕвĕсĕр çăлăнăç çук. Христос чиркĕвĕн яланах çурт пулнă. Унта кашниех кĕлле хутшăнма, çылăх каçарттарма, Христос Туррăн ӳчĕпе юнне ăша илме пултарнă е хăйĕн инкекĕ-савăнăçĕпе килме пултарнă.

Хаклă тăванăмăрсем! Муркаш – чиркӳ çук пĕртен-пĕр центр. Ку ыйтупа эпир сирĕнпе Чăваш Енте юлашки вырăнта тăратпăр. Тен, пĕтĕм Раççейĕпе те.

Муркашра пурăнакансем! Çак ырă та кирлĕ ĕçрен айккине ан пăрăнăр. Ырă туни ырăпах таврăнать.

Туррăн ырăлăхĕ Сирĕнпе пултăр! Турă çăлтăр Сире!

**Владимирти Турă Амăшĕн чиркĕвĕн прихут Канашĕ.**

Пирĕн реквизитсем: АК сбербанка РФ Моргаушское отделение № 7034.

ИНН 2112001648 БИК 049706609.

р/с №40703810375140000046 к/с 30101810300000000609

Контактные тел: 8(241)2-16-11, Куликова Валентина Васильевна (бухгалтер).

8-903-064-87-10, Федор Ягушов иерей (настоятель).

Прихут Канашĕ ноябрĕн 4-мĕшĕнче Муркашра пурăнакансене кĕлĕ çуртне тума пуçлама чĕнет. Кунти предприятисен ертӳçисене техникăпа тивĕçтерме ыйтать.

Çак кун ирхине 8 сехетре Муркаш ялĕнчи пулас чиркӳ вырăнне пуçтарăнмалла. Хĕрарăмсен кĕреçе, арçынсен мăлатукпа пăта кăлармалли хатĕр илмелле.

**Çырăнтару**

# Çырăнăр, ӳкĕнмĕр

Паянхи кун питĕ нумай хаçат-журнал пичетленет. Çакă вăл, паллах, лайăх. Хăшне кăмăллатăн, çавна туянма, тĕрлĕ информаци илсе пурнăç уттипе тан пыма пултаратăн. Нумай вулакан, пĕлекен çыннăн ăс-тăнĕ çивĕч, унпа калаçма та интереслĕрех. Енчен те куç япăх курать е пачах та курмасть, ку чухне камран пулăшу ыйтмалла-ха?

Çак инкек сирĕн ума çитрĕ пулсан, Пĕтĕм тĕнчери куç япăх куракансен пĕрлешĕвĕ алă тăсса пулăшу пама шантарать. “Логос”, полиграфипе тифлоинформаци издательство комплексĕ тĕрлĕ енлĕ журнал кăларать тата сĕнет. Çак ĕçре сасă (магнитофонпа итлес), рельефпа точка (куç курманнисен Брайль системи) тата пысăк шрифт мелĕсемпе усă курать.

Чи малтан тухма пуçланă, анлă сарăлнă, куç курман инвалидсен пурнăçне туллин çутатса параканни “Наша жизнь” журнал пулса тăрать. Ăна алла илсен илемлĕ литературăпа, политикăпа паллашма пулать. Уйăхсерен тухакан изданире “Эпĕ тата общество”, “Тифлологи”, “Реабилитаци урокĕсем”, “Çын тата вăхăт”, “Регионсенчи хыпарсем” кун çути кураççĕ. Çавăн пекех “Калейдоскоп”, “Хозяюшка” рубрикăсем пуриншĕн те усăллă та интереслĕ.

Паянхи кун хăшĕ-пĕрин, тĕрлĕ сăлтавсене пула, тăвата стена хушшинче хупăнма тивет. Кунта чуна уçса çыру йĕрки шăрçаласа яма, шухăш-кăмăла пĕлтерме пулать. Вĕсене журналта хапăл тусах йышăнаççĕ, аякка тĕксе хăвармаççĕ. Куç япăх куракансен пысăк инкекĕ вăл пур хаçат-журнала та вулама пултарайманни. Çавăнпа та унта ĕçлекенсем пире ăнланма тăрăшнăран, журнал 2002 çултанпа пысăк шрифтсемпе пичетленет.

“Роспечать” агентствин каталогĕ тăрăх кирек хăш çыхăну уйрăмĕнче те “Наша жизнь” журнала çырăнма пулать. Хакĕ çур çула 114 тенкĕ (индексĕ 732801). Кларăм ĕнтĕ, ăна тĕрлĕ енлĕ кăлараççĕ.

Паллах, куç курманнисемшĕн сасă мелĕпе итлемелли аванрах. Л.Н. Толстой ячĕллĕ ятарлă библиотека пирĕншĕн нумай ĕç туса ирттерет. Кунти фонд сасă журналĕсемпе пуян. “Диалог”, “Хочу все знать”, “Журнал для всей семьи”, “Здоровье”, “Мысль”, “Философия” тата ытти изданисем сĕнет.

Рельефпа точка шрифчĕсемпе кăларнă уйăхсерен журналсемпе альманахсем, илемлĕ литература “Знание”, “Школьный вестник”, “Детское чтение”, “Литературное чтение и приложения к ним” вулакансемшĕн меллĕ шутланаççĕ.

“Наша жизнь” тата ытти çавăн йышши журнала çырăнни çирĕпленнĕ çывăх юлташ пулма пултарать. Унпа çывăхлансан куç япăх куракан инвалид çын сассине илттĕр, хăй те çын пулнине туйтăр.

**А. МИХАЙЛОВА, Муркаш районĕнчи куç курманнисен вырăнти организацийĕн ертӳçи.**

**Шкулсенчен хыпарлаççĕ**

# Пурте пĕрле пухăнса

“Кĕрхи кун çулталăк тăрантарать”, – тенĕ ваттисем. Эпир вара, Шурча шкулĕнче ĕçлекенсем тата вĕренекенсем, çак каларăшăн пĕлтерĕшне анлăрах пĕлес тесе октябрĕн 13-мĕшĕнче “Кĕр уявĕ” ирттерес терĕмĕр.

Уяв интереслĕ иртесси малтанах паллă пулчĕ. Уроксем хыççăн кашни класрах юрăпа ташă конкурсне хатĕрленни курăнчĕ, çут çанталăк парнисенчен ачасем тĕрлĕрен интереслĕ япаласем хатĕрлерĕç, кĕрхи кунсене хăйсен ӳкерчĕкĕсенче сăнласа кăтартрĕç. Уяв кунне вара кашни вĕренекен хăйĕнпе пĕрле шкула килте пĕçернĕ тĕрлĕрен тутлă çимĕç илсе килчĕ. Сĕтел çинче çăкăр та, торт та, салатсем те, кукăль, икерчĕ, печени, пирожнăйсем тата тем те пĕр курăнчĕ. Унсăр пуçне ачасем тĕлĕнтермĕш пахча çимĕçсем, чечексем илсе килме те манман. Çак пĕтĕм пуянлăха классенче вырнаçтарса лартма пĕр сĕтел кăна çитмерĕ те. Хаваслă иртрĕ уяв. Сĕтелсем те пуян, классенче те илемлĕ пулни, концерта та тăрăшса хатĕрленни питĕ савăнтарчĕ.

Жюри членĕсене çĕнтерӳçĕ классене суйласа илме питĕ йывăр пулчĕ, анчах та пĕтĕмлетӳ тунă хыççăн кĕçĕн классем хушшинче 1-мĕшсем, аслисем хушшинче 5-мĕшсем малти вырăнсене тухни палăрчĕ. Ачасене шкул администрацийĕ парнесем парса хавхалантарчĕ. “Герой” хуçалăх пуçлăхĕ Р.Н. Тимофеев та ачасене кĕрхи ĕçсене вăхăтра туса пĕтерме пулăшнăшăн тав турĕ.





Вĕренекенсем ваттисен сăмахĕ чăнахах та тĕрĕс пулнине ăнланчĕç. Уява активлă хутшăннăшăн шкул администрацийĕ ячĕпе ачасене тата вĕсен ашшĕ-амăшĕсене, вĕрентекенсене, класс ертӳçисене, “Герой” хуçалăх ертӳçине тав тăватпăр. Кашни çулах пурте пухăнса çавăн пек хаваслă уяв ирттермелле пултăрччĕ малашне те.

### Манăн пурнăç

Кашни çын пурнăç çине
Хăйне евĕр пăхкалать.
Унăн тĕп пĕлтерĕшне
Тĕрлĕрен ăнлантарать.

Пурнăçăн пĕлтерĕшне
Эп куратăп çемьере,
Суйласа илнĕ ĕçре
Тата çывăх туссенче.

Çемьери çынсем ялан
Пĕрне-пĕри ăнлансан,
Пурте сывлăхлă пулсан,
Пурнăç пулĕччĕ аван.

Юрататăп хам ĕçе,
Пĕрле ĕçлекенсене,
Вашават ачасене –
Пурнăçăн çеçкисене.

Юлташсем пĕрле пулсан,
Йывăр чухне пулăшсан,
Хавас чухне савăнсан,
Пулăп эп чăн-чăн пуян.

Пĕр сăмахпа каласан:
Маншăн пурнăç вăл – шырав.
Хам юратнă çемьере
Эпĕ тупрăм телее.

Ачасене вĕрентме
Тăрăшап çĕн меслетпе.
Хамран аслă ĕçтешсем
Ялана параç сĕнӳсем.

Эп телейлĕ пурнăçра
Çавăнпа та ташлама,
Çепĕç юрă юрлама,
Ним те чарас çук мана.

**Н.В. БОРЗАЕВА, Шурча шкулĕн вожатăйĕ.**

### Кĕрхи уяв

Çулталăкăн тепĕр вăхăчĕ – кĕркунне. Кĕркунне икĕ ушкăна пайланать. Хура кĕркунне вăхăтĕнче кăмăлсем те хаваслах мар. Ылтăн кĕркунне кашнин кăмăлне çĕклет. Тавралăх ылтăн тĕспе витĕнет. Вăрмана кайса çулçă тăрăх чăштăртатса утас килет. Çак вăхăтра пахчаран юлашки çимĕçсене пуçтарса кĕртеççĕ.

Шкул ачисем те шкул пахчинчен пахча çимĕçсене пуçтараççĕ, кĕр уявне хатĕрленме тытăнаççĕ. Пирĕн шкулта та кĕр уявĕ пуласси çинчен пĕлтерӳ çакрĕç. Кĕр уявĕ валли кашни класăн юрă, ташă, сăвă хатĕрлемелле тата кĕрхи çи-пуçа сăнласа памалла пулчĕ. Унсăр пуçне кашни класăн торт, çавра çăкăр, стена хаçачĕ, тĕлĕнтермĕш çимĕç хатĕрлемелле.

Акă кĕтнĕ кун çитрĕ. Ачасем зала пуçтарăнчĕç. Чи малтан хăйсен пултарулăхне кĕçĕн классем кăтартрĕç. Вĕсем те кĕр уявне тăрăшса хатĕрленни курăнчĕ. Кайран аслă классем хăйсен пултарулăх номерĕсене кăтартма тытăнчĕç. Кашни класс питĕ тимлĕ хатĕрленнĕ. Анчах та çиччĕмĕш классене çитекенни пулмарĕ. Вĕсем пĕрремĕш вырăн йышăнма пултарчĕç. Иккĕмĕш вырăна улттăмĕшсемпе тăххăрмĕшсем пайларĕç. Виççĕмĕш вырăн саккăрмĕшпе пиллĕкмĕшсене çакланчĕ. Ун хыççăн жюри ачасем хатĕрленĕ тутлăрах, илемлĕрех çимĕçсене пăхса тухрĕ. Тăрăшуллă ачасене парнесем çакланчĕç. Çавăн пекех жюри тĕлĕнтермĕш стена хаçачĕсене те пысăк хак пачĕ. Кашни шкул ачи кĕр уявĕпе кăмăллă юлчĕ.

**Ирина БЕЛОВА, 6-мĕш класра вĕренекен.**

Сосновка шкулĕ.

**Редакци почтинчен**

# Ăçта лайăх: хулара е ялта?

Ялта ĕç нумаййине кашниех пĕлетпĕр. Выльăх-чĕрлĕхĕ, кил картишĕ. Çуркунне пахчинче çĕрне сухаламалла, çимĕçне лартмалла, пăхмалла. Çулла уттине çулмалла, типĕтсе кĕртмелле. 60 сотăй çĕрĕ çинче ĕçлемелĕх пур вара. Часах кĕтӳ (касу) пăхма черет çитет, тата ытти те – нумай ĕç. Çак йывăрлăха чăтаймасăр çăмăл пурнăç шырама çамрăксем хулана талпăнаççĕ. Ялта çын шучĕ çулсерен чакса пырать: çемье çавăрсан, ача çуратакан сахал; çĕр айне выртакан чылай.

“Мĕншĕн яла юлмалла? 30 çула çитсенех 60 çулти хĕрарăм евĕр пулса ларатăн. Мĕн виличчен, кунĕн-çĕрĕн хура çĕр çинче ĕçлемелле. Ку пурнăç-и вара. Çу-ук!” – çакăн пек нумай çамрăк шухăшĕ. Эпĕ те çакăнпа килĕшетĕп, йывăрлăхĕ нумай ялта.

Халĕ тата чылай ялта колхозсем те йĕркеллĕ ĕçлеймеççĕ. Çавна пулах ял арçыннисем Мускава “пысăк” укçа ĕçлесе илме тухса каяççĕ. Вара пĕтĕм ĕç хĕрарăм çине тиенет.

Юрать-ха юлашки вăхăтра ăшăтма вутă, кăмрăк туянас шухăш çук. Çут çанталăк газĕн ырлăхĕпе савăнса çитерейменççĕ ялсенче. Ырри – малалла. Хăшĕ-пĕрисен пӳртрех, хулари пек, ваннăй, душ тата туалет та пур. Кран уçсан сивĕ шывĕ те, ăшă шывĕ те юхать. Пурăнма пĕтĕм услови пур. Апла пулсан, çамрăксем те ялта тĕпленсе пурăнма пуçлĕç? Тем пекехчĕ.

**Инна ЯШКОВА.**

**Пĕлтерӳсем. Объявления**

**Куплю однокомнатную квартиру. Телефон: 8-927-665-14-09.**

**Продаю трактор ЮМЗ-6 с прицепом, есть плуг. Телефон: 52-5-52, с. Б. Сундырь.**

**К СВЕДЕНИЮ ПОКУПАТЕЛЕЙ!**
**В магазине «Гастроном» с. Моргауши открыт отдел «Чебоксарский трикотаж». В широком ассортименте мужской, женский, детский трикотаж, а так же чулочно-носочные изделия. Цены фирменного магазина.**

**Продаю земельный участок под строительство дома в д. Шептак-Моргауши, 40 соток. Свет, газ, водопровод проведен. Есть застройка 11м.х6м. под гараж, погреб. Сзади участка плотина. Телефон: 8-905-347-70-47.**

Мăн Сĕнтĕр райпо Канашĕ, правленийĕ тата коллективĕ хаксемпе ĕçлекен экономистăн Л.А. Смирнован амăшĕ

**Феодосия Сергеевна МАТВЕЕВА**

вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе тарăннăн хурланни çинчен пĕлтереççĕ.

**Паянхи хаçат номерĕн 5-6 страницисенче пай çĕрĕсен хуçисен пĕлтерĕвĕсем заказ шучĕпе пичетленеççĕ. Ял тăрăхĕсенче паллашмалла.**

**Хаçатăн çитес номерĕ эрне кун тухать.**

ГУП ЧР “Моргаушский издательский дом”
Моргаушская районная газета "ÇĔНТЕРӲ ЯЛАВĔ"
УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.
Директор-главный редактор А.И. ТИХОНОВ.

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу. Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Печать офсетная, объем 1,0 п. листа. Тираж 3364.
Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану çулĕпе».
Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 31.10.2006 г.
Заказ
Дежурный по номеру ИЛЛАРИОНОВА Р.
ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан в типографии ГУП ”ИПК ”Чувашия”: 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.